Çамрăксен ыйтăвĕсемпе

# «Анне, эпĕ килтĕм!», е ...

Ывăлĕсене çара ăсатнă чух амăшĕсем куççуль кăлармасăр темĕн тесен те чăтаймаççех. Хăйсен тĕпренчĕкĕсене тăван килĕнчен аякка, пĕлмен вырăна ăсатаççĕçке. Тепĕр чух, паллах, инçе мар вырнаçнă чаçе лекесси те пулкалать.

«Виçĕ кун каялла çара ăсатрăмăр, паян вара вăл ялта утать» тесе калаçнине эпир пĕрре мар илтнĕ ĕнтĕ. Çапла, Канаш хулинчен каялла таврăнакансем ăсату практикинче çук мар. Пĕр енче амăшĕн стресĕ, ывăлĕн туйăмĕсем. Укçа-тенкĕ тăкакĕ те çавăнтах. Тепĕр енче вара...

Мĕншĕн Канашран «салтаксем» каялла таврăнаççĕха? Çак нумай амăшне канăç паман ыйту çине Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариачĕн 2-мĕш уйрăмĕн пуçлăхĕн аслă пулăшаканĕ Игорь Васильевич Ермолаев хурав пачĕ:

– Призывниксем Канаш хулинчи сбор пунктĕнчен, чăнах та, каялла таврăнни пулать. Ку вăл, пĕрремĕшĕнчен, пулас салтак мораль тата ĕçлĕх енĕсемпе вăйсăр пулнипе çыхăннă. Иккĕмĕш сăлтав – призывникăн çурăмĕ хыçĕнче шкулти 9 класс кăна пулни. Виççĕмĕшĕ – яшсен РОСТО системипе çар учетĕнчи специальноç çукки. Çапла вара салтаксене илме килнĕ офицерсем хăйсен çар тĕсĕсене шута хунипе пĕрлех призывниксен асăннă енĕсене те тимлĕн тишкереççĕ, – терĕ призывниксемпе вунă çул ытла ĕçлекен специалист.

Игорь Васильевич каланă тăрăх, пирĕн республикăра çара валли водительсем хатĕрлес енĕпе те план тулмасть иккен. Пулас салтаксен пĕлĕвĕ те çӳллĕ шайрах мар. Темиçе çул каялла шкулсенче «начальная военная подготовка» предмет пурччĕ, халĕ вара ОБЖ урокĕсем çеç. «Апла пулсан та Муркашри вăтам шкулта çеç ку уроксенче тулли пĕлӳ илме пулать. Пĕчĕк калибрлă винтовкăсенчен пемелли тир пурри мĕне тăрать. Ытти шкулсенче кун пек майсем çук. Мăн Сĕнтĕрти шкул, ыттисемпе танлаштарсан, кăшт çӳллĕрех шайра. Çавăнпа та районти аслă классенчи яшсен 3-5 кунлăх тăсăлакан ятарлă сборсенчен юлма тăрăшмалла мар», – пĕлтерчĕ вăл хăйĕн шухăшне.

Сывлăх енĕпе те призывниксем хавшакрах иккен. Яшсен ытларах чух терапи тата хирурги чирĕсем пуррине çирĕплетеççĕ медицина тĕрĕслевĕсем: гастрит, язва, тӳрĕ лапăллă ура... Апла пулсан тĕрĕс апатланасси пирки мĕн ачаранах ăнлантармалла, сывă пурнăç йĕркине тытма та малтан килте, кайран шкулта хăнăхтарса пымалла.

Шкул тенĕрен, çарпа патриотика клубĕсем те çук мар-ха районта: «Родина», М. Шуйцев, Е. Борисов ячĕллисем... Анчах пуринче те патриотла воспитани кирлĕ пек пулса пымасть пулас. Çĕршыв хӳтĕлевçин сăн-сăпатне ачана вăл сĕтел айĕпе перĕнмесĕр утса çӳренĕ чухнех тĕрĕс кăтартса памалла. Çар вăл – чăн-чăн арçынсен шкулĕ, туслăх шкулĕ пулнине яшсен самай маларах – шкула кайиччченех – пĕлмелле пулĕ тесе шутлатăп. Вара çĕр-шыва хӳтĕлекенсем çирĕп кăмăллă пулса ӳсĕç, çарпа патриотика клубĕсене çӳрекенсем те аслă пĕлӳ илме çар шкулĕсене, училищĕсемпе академисене çул тытĕç. Çавăн чух вара тин çак клубсем хăйсен тивĕçне туллин пурнăçлани пулĕ.

Акă Шуйцев ячĕллĕ клубран ку таранччен çар училищисене вĕренме каякан пĕр çын та пулман-ха... Ку – сăмах май. Анчах – шутласа пăхмашкăн.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Пурнăç вĕресе тăрать

Турай шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Г. Андреева редакцие шкулта ашшĕ-амăшĕсен иртнĕ пухăвĕ çинчен çырса пĕлтерчĕ. Пухура ытти ыйтусемпе пĕрлех ачасене профессие кĕçĕн классенчех тĕрĕс суйласа илме пулăшасси пирки калаçнă. Наукăпа техника хăвăрт аталаннă май халь вĕренсе тухакансен çĕнĕрен профессисем илме те май пур. Апла пулсан ачасене çĕнĕ профессисен пĕлтерĕшне ăнлантарсах пымалла. Шкулпа ашшĕ-амăшĕсен тачă çыхăну тытмалла. Шкулта иртнĕ пуху çакăн пек пĕтĕмлетӳсем кăларса тăратнă.

Москакассинчи шкулта вĕренекен Анна Царева ача-пăчасен паллă çыравçи Н. Носов çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă уяв пирки хыпарларĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем тăрăшсах çак çыравçăн кĕнекисене вуласа тухнă. Кайран вара, уяв кунĕнче, викторинăна та активлă хутшăннă. Тĕрĕс те хăвăрт хуравсем паракансем Ирина Архипова, Диана Кириллова, Дмитрий Демидов, Елена Николаева, Анна Алексеева тата ыттисем пулнă. Вĕсене парнесемпе чысланă.

Нискассинчи вăтам шкултан та ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ иртни çинчен пĕлтерчĕç. Нискассисем ытларах воспитани ыйтăвĕсем тавра калаçнă. Çемьери тата шкулти воспитани хура-шурă пек уйрăлса тăмалла марри
не палăртса хăварнă пухура. В. Басяев – Нискассинчи çемье офисĕн врачĕ – вĕренекенсен сывлăхĕ мĕнле шайра пулнипе паллаштарнă. Уйрăмах ачасен куçĕсем япăх курни пирки, çӳллĕ кĕлĕллĕ пушмакпа çӳренин сиенĕ пирки тĕплĕн ăнлантарнă. Врач ачасене шкула кĕсье телефонĕсене парса ямалла маррине хытарсах каланă.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**


СвязьБанк
...то, что нас связывает

**Просто**
- Оформить вклад ОАО АКБ“Связь - Банк” можно прямо в почтовом отделении. Это займет у Вас всего несколько минут.

**Выгодно**
- Предлагаем Вам привлекательные рыночные процентные ставки по вкладам, разработанные с учетом специфики Вашего региона.

**Надежно**
- ОАО АКБ “Связь - Банк” является крупнейшим отраслевым банком и сотрудничает с Почтой России уже более 16 лет. ОАО АКБ “Связь - Банк” входит в государственную систему страхования вкладов.

Вклады застрахованы
Система страхования вкладов

www.sviaz-bank.ru
ОАО АКБ «Связь-Банк» основано в 1991 году.
Генеральная лицензия Банка России № 1470 от 15.11.02

Банковские вклады в отделениях почтовой связи **правильные** финансовые решения!

Дополнительную информацию и необходимые разъяснения о предлагаемых Банком услугах Вы можете получить в отделениях почтовой связи Вашего района или по адресу:
**Чувашский филиал ОАО АКБ “Связь-Банк”, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д.44.**
Контактные телефоны: **(8352) 66-20-86**
**Контакт-центр: 8 (800) 200-23-03**
(круглосуточно, звонок по России бесплатный)


Вулакансен пултарулăхĕ

# Юрататăп аннене

Юрататăп аннене,
Ăшă-ăшă аллине,
Унăн çутă сăн-питне,
Хĕвел евĕр куллине.

Çĕр çинчи чи хаклă çын
Вăл – анне, чи юратни.
Пирĕншĕн кăна пурнать,
Мала утма вăй парать.

Юратнă аннеçĕм, анне!
Нихăçан та ан чирле,
Тулăх пултăр пурнăçу,
Ялан сунатăп ăнăçу.

**Кристина БЫЧКОВА,**
**Турайри вăтам шкул.**


**Продаю участок 40 соток с домом (возможно под снос) в деревне Хорной, асфальт до дома, по улице газ, водопровод. Документы готовы. Дом в центре улицы.**
**Тел.: 8-917-664-68-93, 8-906-389-50-79.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:070201:120, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шатракасы, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:070201, площадью 6084 кв. м.**

**Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о предполагаемом предоставлении Яковлевой Эльвире Витальевне в аренду земельного участка для строительства магазина, из земель населенных пунктов, с кадастровым номером 21:17:1605014:3, местоположение: участок находится примерно в 100 м по направлению на северо-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, д. Малиновка, ул. Малиновская, д. 11, площадью 50 кв. м.**

**Замечания и предложения принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для создания искусственного пруда, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:070801:118, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Калайкасы, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:070801, площадью 4360 кв. м.**

**Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Участник долевой собственности Кульков Николай Николаевич, 14.06.1964 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Вомбакасы, ул. Хырлыхская, д. 80, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Сундырский», расположенного в поле № 8, полевой севооборот № 2 площадью 13,1 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Большесундырского сельского поселения.**
**2. Кулькову Николаю Николаевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Вомбакасы, ул. Хырлыхская, д. 80.**


**Каснă йăмра сутатăп (çурман). Хакĕ калаçнă тăрăх, хаклах ыйтмастăп, Пиккикасси ялĕ. Тел.: 8-927-845-70-53.**

**Срочно продаю автомашину ВАЗ-2110 2005 года выпуска, снежная королева, 59000 пробег, музыка, тонировка, сигнализация с пейджером. Цена договорная.**
**Тел.: 8-927-846-64-45.**

**Продаю: две овцематки с ягнятами, 2 пары индюков, автомобиль ГАЗ-53, самосвал. Тел.: 8-927-842-85-60.**

**Продаю автомашину ВАЗ-21099 2000 года выпуска, евросалон, инжектор, цвет серебристо-черный, бортовой компьютер, музыка. По договорной цене.**
**Тел.: 8-906-388-15-41.**

**Продаем с доставкой ячмень, отруби, комбикорма. Грузоперевозки. Тел.: 8-919-679-96-97.** 2-3.

**Продаю автомашину «Фольксваген-Гольф-2», двигатель 1800 куб. см, цвет серебристый, 1989 года выпуска, два комплекта зимней резины. Торг.**
**Тел.: 8-927-667-84-70.** 2-2.

**КПКГ «Заря-Кредит» принимает сбережения от пайщиков на выгодных условиях по адресу: остановка Москакасы, здание «Автомиг», 2 этаж.**
**Тел.: 66-2-16, 8-937-370-23-69.** 5-11.

МИР окон и дверей
ОКНА пластиковые
от ведущего производителя Чувашии теперь... в МОРГАУШАХ
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
29-80-60 8-927-669-80-60

*Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.*

**Спутниковое телевидение от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95. Спутниковый интернет.** 12-20.

**12 декабря в РДК с. Моргауши состоится большая распродажа таможенного конфиската. Верхняя зимняя одежда, а также обувь в ассортименте. Ждем вас с 10-00 до 16-00 часов. Наши цены вас приятно удивят.**
**Кострома.** 3-3.


Коллектив Чебоксарского ТПУ ОАО «Чувашавтодор выражает глубокое соболезнование водителю автомобиля Бочкину Юрию Степановичу, его семье и близким по поводу смерти матери
**БОЧКИНОЙ**
**Нины Степановны,**
жительницы д. Ландыши.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Христина Петровна**
**НОДЫКОВА**
ĕç ветеранĕ, пенсионерка йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Альберт Михайлович**
**НОДЫКОВ**
йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ
**Лев Тарасович**
**АВИЛОВ**
ĕç ветеранĕ, пенсионер вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Заместитель гл. редактора Шапошников В.Л.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 09.12.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.